25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1942
ДЕКАБРЬ
24
КĔÇНЕРНИКУН
296(6231) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ЮЛАШКИ СЕХЕТРЕ

Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем малалла наступлени тăваççĕ

Декабрĕн 23-мĕшĕнче пирĕн войскăсем, Дон шывĕн вăтаçĕрĕнчи районра малтанхи еннеллех ăнăçлă наступлени туса пырса, 20—30 километр малалла кайнă. Çичĕ кун хушши наступлени туса, пирĕн войскăсем пĕтĕмпе 115—165 километр малалла куçнă.

Пирĕн войскăсем халăх пурăнакан темиçе вуншар пункта, вăл шутрах халăх пурăнакан пысăк пунктсене — КАБЫЧИНО, БАРАННИКОВКА, НОВОСЕЛОВКА, ОЛЬХОВЫЙ РОГ, БОЛЬШИНСКАЯ, СУЛИНСКИЙ ятлă пунктсене тата ВОЛОШИНО, ПЕРВОМАЙСКОЕ ятлă район центрĕсене йышăнса илнĕ.

Декабрĕн 23-мĕшĕ вĕçленнĕ тĕле тыткăна илнисен хисепĕ татах 16.400 çын чухлĕ ӳснĕ. Декабрĕн 16-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем пĕтĕмпе противникăн 36.600 салтакĕпе офицерне тыткăна илнĕ.

Декабрĕн 16-мĕшĕпе 23-мĕшĕ хушшинчи çапăçусенче пирĕн войскăсем çакăн чухлĕ трофейăсем тытса илнĕ: танксем — 143, тĕрлĕ калибрлă орудисем — 1.805, пулеметсем — 2.849, автоматсем — 2.000, винтовкăсем — 48.399, автомашинăсем — 7.414, мотоциклсем — 1.151, лашасем — 5.800.

Пĕтерсе тăкнă: самолетсем — 85, танксем — 120, орудисем — 235, автомашинăсем — 1.000 ытла, тĕрлĕ çар пурлăхĕ тиенĕ лавсем — 900 ытла.

Декабрĕн 22-мĕшĕнче çапăçу хирĕнче противникăн 8.000 яхăн салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă.

СОВИНФОРМБЮРО.

Мускав, Кремль, Иосиф Виссарионович Сталин юлташа

Эсир Тамбов облаçĕнчи колхозниксене ответлесе янă телеграммăна сӳтсе явсан (вăл телеграммăра Эсир танксен «Тамбовский колхозник» ятлă колоннине тума укçа пухнине ырланă), Кзыл-Орда облаçĕнчи Казалинский районри колхозăн колхозникĕсем танксен «Колхозник Казахстана» ятлă колоннине тума 220.000 тенкĕ укçа хыврĕç, вăл шутран эпĕ хам 100.000 тенкĕ хыврăм. Казахстанри колхозниксен укçипе тунă танксем «Колхозник Казахстана» ятлă колонни тăшманшăн — нимĕç оккупанчĕсемшĕн вĕсене хăватлăн, вĕлермелле пырса çапни пулса тăтăр.

КАЗАКПАЙ ПРИМОВ,
Кзыл-Орда облаçĕнчи Казалински районри «Кзыл-Ту» колхозăн председателĕ,
СССР Верховный Совечĕн депутачĕ.

Казах ССР-чи Кзыл-Орда облаçĕнчи Казалински районри Кзыл-Ту колхоз, колхоз председательне Казакпай Примова

Хĕрлĕ Çаршăн тăрăшнăшăн «Кзыл-Ту» колхозăн колхозникĕсене тата Сире, Казакпай Примов юлташ, тав тăватăп.

Манран салам йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль, Сталин юлташа

Танксен колоннине тума хамăн укçаран 105.000 тенкĕ хыватăп.

КИМ МАНСАМ,
Казах ССР-чи Кзыл-Орда облаçĕнчи Чиилийский районри «Авангард» колхозăн звеновочĕ.

Казах ССР-чи Кзыл-Орда облаçĕнчи Чиилийский районри „Авангард“ колхоз, Ким Мансам колхознике

Бронетанковăй вăйсемшĕн тăрăшнăшăн Эсир, Ким Мансам юлташ, манран салам тата Хĕрлĕ Çарăн тавне йышăнăр.

И. СТАЛИН.

Мускав, Кремль, И. В. Сталин юлташа

ХАКЛĂ ИОСИФ ВИССАРИОНОВИЧ!

Сирĕн историллĕ докладпа тата приказпа хавхаланса тата Ферапонт Головатый колхозникăн ырă пуçарăвне йышăнса, эпĕ декабрĕн 20-мĕшĕнче Государство банкне хăватлă совет танкĕ тума хамăн перекетлесе хăварнă 125 пин тенкĕ укçана хыврăм.

Ирсĕр тăшмана çĕнтермешкĕн эпĕ хамăн перекетлесе хăварнă укçана çеç мар, хамăн пурнăçа та пама хатĕр. Манăн танк пирĕн хăватлă Тăван çĕршывăн пĕтĕшĕн фашистла таса марлăхсене таптаса аркатса пытăр.

Мускав облаçĕнчи Коломна районĕнчи Дмитров ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ СТЕПАН ГРИГОРЬЕВИЧ АЛИШКИН.

ЦК ВКП(б), И. В. Сталин юлташа

ХАКЛĂ СТАЛИН ЮЛТАШ!

Эсир 1942 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă доклад çине ответлесе тата Тамбов облаçĕнчи колхозниксен ырă пуçарăвне йышăнса, эпĕ «Правда» хаçат урлă Совет çĕршывĕнчи хĕрарăмсене, фронтовиксен хĕрарăмĕсене, фронтовиксен хĕрарăмĕсен ячĕпе танксен колоннине тума текущи счет уçса укçа хывма чĕнесшĕн. Çавăн пек счет уçса эпĕ 1.000 тенкĕ укçа хывасшăн.

Эпĕ — фронтовик арăмĕ. Манăн упăшка отечественнăй вăрçă пуçланнăранпах фронтра. Вăл йывăр амантнăччĕ, госпитальре сывалса выртрĕ, ун кăçăн килте выртрĕ. Эпĕ ăна сыватас тесе, вăл пирĕн Тăван çĕршыва хӳтĕлекенсен ретне тепĕр хут тăма пултартăр тесе питĕ тăрăшрăм. Вăл тепĕр хут фронта кайни виçĕ уйăх çитрĕ ĕнтĕ. Пĕр çул каялла эпĕ çĕршыв обсронин фондне 4.000 тенкĕ укçа хывнăччĕ. Вăл укçана эпĕ ун чухне упăшкан аттестат тăрăх илсе тăнă укçаран перекетлесе хăварнăччĕ.

Халĕ хывакан укçана эпĕ хамăн ĕçу кунĕнчен перекетлесе хăварнă.

Эпĕ хамăн Тăван çĕршыва, хама вĕрентсе ахаль прислугăран инженер-руководитель-хозяйственник таран хăпартса çитернĕ хамăн партие юрататăп.

Сире пĕтĕм чĕререн юратакан АЛЕКСАНДРА СМИРНОВА.

Мускав, Мосгортекстильсоюз.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Хĕрлĕ Çар чаçĕсен Хĕрлĕ Ялавĕн çĕнĕ образецне çирĕплетесси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕ çапла йышăнать:

1. Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсене тунă чухне вĕсене памалли Хĕрлĕ Ялавăн çĕнĕ образецне çирĕплетес.
2. Хĕрлĕ Çар чаçĕсен Хĕрлĕ Ялавĕн положенине çирĕплетес.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ.

Ялхуçалăхĕнчи çитĕнӳсене çирĕплетсе, çĕнĕ çĕнтерӳсемшĕн кĕрешер!

И. ЧАРЫКОВ
ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ

Совет халăхĕ çулталăк çурă ытла ĕнтĕ нимĕç захватчикĕсене хирĕç отечественнăй аслă вăрçă туса пырать. Социализмлă государство йывăр испытани тытать. Çак вăрçă мĕнле вĕçленнинчен Октябрьти социализмлă революци çĕнтерсе илнисен кун-çулĕ, пĕтĕм этемлĕхĕн пуласлăхĕ килсе тăрать.

Пирĕн колхозлă хресченсем, пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, çак кунсенче пĕр таса тĕллевпе—тăван çĕре фашистла пусмăрçăсенчен мĕнле те пулин хăвăртрах тасатас тĕллевпе пурăнаççĕ. Колхозниксемпе колхозницăсем Сталин юлташăн историллĕ кăтартăвĕсене—ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе фронтпа çĕршыва ытларах та ытларах тырпул, ашкакай тата промышленность валли чĕртавар парса тăма хушнисене пурнăçа кĕртес ĕçе çавтери пысăк çекленӳпе тытăнчĕç.

Вăрçă колхоз стройĕ çирĕп пулнине уççăн кăтартса пачĕ. Вăрçă обстановкине пула сиксе тухнă йывăрлăхсене пăхмасăр, пирĕн çĕршывăн ялхуçалăхĕ кăçал çуракине тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçе ăнăçлăн туса ирттерчĕ. Октябрьти социализмлă революци 25 тултарни çинчен тунă хăйĕн докладĕнче Сталин юлташ колхозниксем вăйя шеллемесĕр ĕçленине пысăк хак пачĕ. Халăхсен çулпуçĕ çапла каларĕ: «Пирĕн... колхозсемпе совхозсем, вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăр, самах та çук, çителĕклĕ ĕçлеççĕ... Пирĕн колхозсемпе совхозсем тӳрĕ кăмăлпа тата тĕрĕс-тĕкĕл ĕçлесе халăхпа Хĕрлĕ Çар валли продовольстви, промышленность валли чĕртавар парса тăраççĕ». Колхоз стройĕ йывăр испытанисене чыслăн тӳссе ирттерчĕ. Халĕ ĕнтĕ кашниех курать, колхозсемпе совхозсем пулман пулсан, пирĕн çĕршыв вăрçă вăхăтĕнче ялхуçалăх умне тухса тăнă йывăрлăхсене çĕнтерейĕмен пулĕччĕ.

Пирĕн республикăри ялхуçалăхĕ те 1942 çулта чылай ӳсĕмсем турĕ. Чăваш республикинчи колхозсем, совхозсем тата МТС-сем кăçалхи çуракине тата тырпулсене пухса кĕртес ĕçе вăрçăччен хинчен хăвăртрах та организованнăрах туса ирттерчĕç. Çапла, сăмахран, 1939 çулта кашни пилĕккунлăхра вăтамран ака планне 22,6 процент, 1940 çулта—21 процент, 1941 çулта—20,5 процент тултарса пынă пулсан, 1942 çулта—25,2 процент тултарса пынă. Колхоз стройĕн мĕнле пысăк майсем пуррине çакă ĕнтĕ уççăн кăтартса парать.

Колхозлă ял умне вăрçă пысăк требованисем кăларса тăратрĕ. Фронтпа тыла тырпул, çĕрулми, пахча-çимĕçсем тата ытти продуктсем кирлĕ. Ялхуçалăх продукчĕсем туса илессине пĕр чарăнусăр ӳстерсе пымасан, вăрçăра çĕнтерме çук. Тĕштырăпа техникăллă культурăсем, çĕрулмипе пахча-çимĕçсем акăнакан çĕр лаптăкне пирĕн республикăри колхозсем кăçал чылай ӳстерчĕç. Республикăра çĕнĕ техникăллă культурăсем—кок-сагызпа сахăр кăшманнĕ акас ĕçе вĕренсе алла илнĕ. Çуракине ăнăçлăн ирттерсе тата ялхуçалăх культурисене лайăх пăхса ӳстерсе, колхозсем кăçал лайăх тырпул туса илчĕç. Республикăра тĕштырăсен вăтам тухăçлăхĕ кăçал планпа палăртнинчен пысăкрах пулчĕ. Йĕтĕнпе кантăр пек пахакультурăсене те пысăк тухăçлăхпа туса илнĕ. Çĕрулмине, пахча-çимĕçсемпе акнă курăксене те гектар пуçне пĕлтĕрхинчен чылай нумайрах туса илнĕ.

Ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе Вăрнар, Калинински, Шупашкар, Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай районĕсем уйрăмах лайăх тĕслĕхсем кăтартрĕç. Пăрачкав, Кувакино тата Улатăр районĕсенчи колхозсем пысăк тухăçлă йĕтĕн туса илчĕç. Республикăри çĕршер колхозсем вăрçă вăхăтĕнчи пек вăйлă тырпул пăхса ӳстерчĕç. Çапла, сăмахран, Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхоз кашни гектартан 25 центнер тĕштырă туса илнĕ; Шупашкар районĕнчи «Осоавиахим» колхоз—18,3 центнер, Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз—16,2 центнер туса илнĕ. Махорка лартса ӳстерес ĕçре палăрнă Дадонова юлташ, Улатăр районĕнчи «Путь Ильича» колхоз колхозницi, гектартан 70-шер центнер махорка туса илнĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи пек пысăк тухăçлă тырпул туса илни—колхозниксем тимлĕн ĕçленин, агротехникăпа анлăн усă курнин результачĕ. Опыт кăтартса панă тăрăх, колхозсене чăннипех большевикла ертсе пынă çĕрте, коммунистсемпе комсомолецсем колхозниксен ĕçри çекленӳне пуçарса пынă çĕрте, вĕсене фронта пулăшма мобилизациленĕ çĕрте пысăк ӳсĕмсем тунă. Кольцовка колхозникĕсен примерĕ шăпах çакăн çинчен калать ĕнтĕ.

Ĕçсынни депутачĕсен райсовет исполкомĕсем, ВКП(б) райкомĕсем тата республикăри çĕрĕç органĕсем чăннипех вăрçă вăхăчĕ ыйтнă пек ĕçленĕ пулсан, пирĕн республикăри ялхуçалăхĕн çитĕнĕвĕсем татах та пысăкрах пулнă пулĕччĕç. Ялхуçалăхĕнчи ĕçсене туса ирттерес çĕрте пирĕн кăçал чылай пысăк çитменлĕхсем те пулчĕç. Вăл çитменлĕхсенчен пĕри, чи малтан, хăшпĕр районсем вăрлăха вăхăтра хывса хăварманни тата ăна кирлĕ пек тасатса хатĕрлеменни пулса тăрать.

Йĕпреç, Çĕмĕрле, Кувакино тата ытти хăшпĕр районсенче акнă тырпула начар пăхса ӳстерчĕç. Çум çумланипе ретсем хушшинче ĕçлени кăçал ялхуçалăх культурисен тухăçлăхне ӳстерес ĕçре питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ тесе СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) кăтартса панине çав районсен руководителĕсем манса кайнă.

Ялхуçалăх ĕçĕсене, уйрăмăнах тырпулсене пухса кĕртес ĕçе организованно туса ирттерес çĕрте партипе правительство трактористсене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен, колхозниксен ĕçкунĕсен минимумне ӳстересси çинчен, тырпулсене пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрлесси çинчен, хуларипе ялти халăха колхозра ĕçлеме мобилизацилесси çинчен йышăннă постановленисем питех те пысăк вырăн йышăнса тăчĕç. СССР Совнаркомĕпе ЦК ВКП(б) хăйсен решенийĕнче çакна палăртрĕç: тырпулсене вăхăтра тата ăнăçлăн пухса кĕресси, ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли государственнăй плансене пурнăçа кĕртесси партипе совет тата комсомол организацисен, колхозсен, МТС-сен, совхозсен тата уборка ĕçĕнче пулнă кашни çыннăн вăрçăпа хуçалăх тĕлĕшĕнчи чи кирлĕ задачи пулса тăрать, вăл задачăна пурнăçа кĕртни нимĕçсен фашистла захватчикĕсене фронтра çĕмĕрсе тăкма пулăшать, терĕç.

Пирĕн республикăри колхозниксемпе колхозницăсем тырпулсене пухса кĕртес ĕçре хăйсен вăйне шеллемесĕр ĕçленин примерне кăтартса пачĕç.

Уборка вăхăтĕнче социализмлă уйхирсен çĕршер çĕнĕ стахановецĕсемпе ударникĕсем ӳссе палăрчĕç. Çитĕннĕ çынсемпе пĕрлех; çамрăк ачасем те, стариксем те тата вĕренекенсем те ывăнма пĕлмесĕр ĕçлени питех те паха факт пулса тăрать. Çĕрпӳ районĕнчи «Красный флот» колхозри 13 çулхи Петя Осипов жнейкăпа ĕçлесе кулленех 8—9 гектар вырса пуçтарнă, нормăпа 4 гектар вырмалла пулнă. Сĕнтĕр районĕнчи «1905 çулти Революци» ятлă колхозри ученик Коля Антонов çуллахи каникулсем вăхăтĕнче 125 ĕçкунĕ тунă. Куславкка районĕнчи «Канаш» колхозри 75 çулти колхозник А. Ярандайкин кашни кунах 1,5-шер норма тултарса пынă, кăçал пĕтĕмпе 300 ĕçкунĕ ытла ĕçлесе илнĕ. Уборка вăхăтĕнче хĕрарăмсем çавтери пысăк тухăçлăхпа ĕçлерĕç, вĕсем ĕçри героизмăн тĕслĕхне кăтартса пачĕç.

Машинăсемпе чылай тухăçлăрах усă куртăмăр. Кăçал комбайнсемпе тата жнейкăсемпе тĕштырăсен 41 процентне вырса пуçтарнă. Елчĕк, Вăрмар тата Советски районсенче тырă вырмалли машинăсемпе уйрăмăнах лайăх усă курчĕç.

Тырă вырас ĕçре пирĕн республикăра кăçал чи малтанхи хут çавасемпе усă курчĕç, çакă вара колхозниксен ĕç тухăçлăхне чылаях ӳстерчĕ. Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи «Родина» колхозра çавасемпе усă курни кĕрхи тырăсене вырас срока 4 кун кĕскетме тата района пĕрремĕш вырăн йышăнма май панă. Çак районри тепĕр колхоз членĕ Степанов юлташ кашни кунах 0,9 гектара çити тырă çулса, 6—7 колхозник вырăнне ĕçленĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн ирттерес çĕрте большевикла агитаци пĕчĕк мар вырăн йышăнчĕ. Республикăри уйхирсенче тырпулсене пухнă вăхăтра ялсенчи коммунистсемпе комсомолецсем, малта пыракан колхозниксемпе ялти интеллигентсем 8.000 çын, хуласемпе районсенчи партипе совет тата комсомол активĕ 1.400 çын ытла агитатор пулса ĕçленĕ. Большевикла чăнлăхăн çулăмлă сăмахĕпе тата хăйсем примерĕ кăтартса, агитаторсем колхозниксемпе колхозницăсене паттăр ĕçсем тума, фронтри пек ĕçлеме хавхалантарса пычĕç.

Анчах та, çитменлĕхсене вăхăтра пĕтернĕ пулсан, тырпулсене пухса кĕртес ĕçе эпир татах та лайăхрах туса ирттерме пултарнă. Чылай районсенче машинăна хирĕçле шухăш-кăмăлсене пĕтĕмĕшпех пĕтерейĕмерĕç. Машинăсемпе начар усă курнине пула, уборка ĕçĕсем вăраха кайрĕç. Куславкка районĕнче тĕштырăсем акнă çĕр лаптăкĕн 26 процентне çеç комбайнсемпе тата жнейкăсемпе вырса пуçтарнă. Çавăнпа кунта уборка ĕçĕсем вăраха кайрĕç. Красноармейски, Первомайски тата Чкаловски районсенче те çакăн пек картинăнах курма пулать.

Тăккаланчăксене хирĕç кĕрешес ĕçе те эпир çителĕксĕр туса пытăмăр. Чăн та, республикăри нумай колхозсемпе МТС-сем çак енĕпе пысăк ĕç туса ирттерчĕç: комбайнсемпе жнейкăсен нумайĕшĕн зерноуловительсем пулнă, чылай çĕр лаптăкĕ çинче пучахсене алăпа тата кĕреплепе пухас ĕçе организациленĕ. Çак ĕçсене пула эпир 120 пин пăт тĕштырă ытларах пухса илтĕмĕр. Анчах, çакăнпа пĕрлех, Елчĕк, Чкаловски, Сĕнтĕр, Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Советски тата ытти районсен руководителĕсем çак питех те кирлĕ ĕç çине çиелтен пăхрĕç, колхозсенче тырпул тăккаланнине пĕтерес тĕлĕшпе çителĕклĕ мерăсем йышăнмарĕç.

Авăн çапас хăвăртлăхсем республикăра пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах пулни те, çапах та пачах çителĕксĕр-ха. Тырпулсене çапса пуçтарас ĕçе халлĕхе икĕ район—Элĕк тата Етĕрне районĕсем çеç вĕçлерĕç. Çак ĕçе 1943 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне туса пĕтерес пулать.

Курăк вăрлăхĕсене çапса илес ĕçе хакламан çĕрĕç органĕсем партипе совет организацисем пысăк йăнăш тăваççĕ. Ку ĕçе хакламасăр тăни пулмалла мар. Курăк вăрлăхĕсене государство парасса шанса тăни пулмалла мар, çакăн пек шухăш-кăмăлсене пĕтерес пулать.

Отечественнăй вăрçă условийĕсенче ялхуçалăхĕнче ĕç вăйĕпе туртăм вăйĕ сахалланнă вăхăтра, машинно-тракторнăй станцисен вырăнĕ вăйлăн ӳсрĕ. МТС-сен нумай руководителĕсем машинăпа тракторсен паркĕн ĕçне пултаруллăн организацилерĕç, механизаторсен пуçарулăхĕпе анлăн усă курчĕç. Çак йывăр кунсенче МТС-сен умĕнче тăракан пысăк задачăсене пурнăçлама трактористсемпе мĕнпур работниксене пĕтĕçтерчĕç.

Декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тракторпа тумалли ĕçсен планне (авăн çапасси сĕр пуçне) 11 МТС тултарчĕç тата 6 МТС — Елчĕк, Элĕк, Вăрнар, Ишлей, Комсомольски, Шăхасан МТС-сĕсем авăн çапас плана пурнăçларĕç. Малта пыракан МТС-сен руководителĕсем запасла пайсене аякран илессе кĕтсе тăмарĕç, вĕсене вырăнтах туса хатĕрлес тата юсас ĕçе организацилерĕç; хăйсене мĕн çитменнине урăх çĕрте шыраса тупса пачĕç, трактористсемпе комбайнерсен хăйсен пуçарулăхĕпе тата тавçăрулăхĕпе анлăн усă курчĕç, тракторсемпе ытти машинăсене пысăк пахалăхпа юсарĕç. Малта пыракан МТС-сенче тракторсене техника тĕлĕшĕнчен лайăх пăхса усрарĕç, çамрăк кадрсене опытлă трактористсемпе пĕрле ĕçлеттерчĕç, опытлă трактористсем вара çамрăк трактористсене тивĕçлипе пулăшса, хирте вĕрентсе пычĕç. Бригадăсемпе трактористсем хушшинче социализмлă ăмăртăва анлăн организацилени, вĕсен ĕçĕсене хисеп хăмисенче кулленех çутатса пыни, кашни кунах массăллă-политикăллă ĕçе туса пыни ĕçре ăнăçусем тума чылай пулăшрĕ.

Трактористсемпе комбайнерсене ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен партипе правительство йышăннă постановленисем трактористсемпе комбайнерсен производствăллă активлăхне вăйлăн çĕклерĕç. МТС-сен механизаторла кадрĕсем, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнăскерсем, фронта пур майсемпе те пулăшас кăмăлпа çунса, ялхуçалăх ĕçĕсенче чăн-чăн героизм кăтартрĕç. Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, çĕршер трактористсемпе комбайнерсем пысăк результатсем пачĕç. Сăмахран, Шăхасан МТС-ĕнчи бригадăсенчен пĕрин çамрăк бригадирĕ И. Михайлов юлташ тракторпа тумалли ĕçсен планне ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне 145 процент тултарчĕ, 1,600 килограмм ытла горючи перекетлесе хăварчĕ. Çĕмĕрле МТС-ĕнчи комбайнер Михайлов юлташ 27 кун хушшинче «Коммунар» комбайнпа 510 гектар вырса пуçтарчĕ, планпа 80 гектар вырмалла пулнă, 300 килограмм бензин перекетлерĕ.

Машинăсемпе тата тракторсемпе лайăх усă курни, горючипе ытти материалсене перекетлессишĕн кĕрешни кашни гектар çинче тунă ĕçсен хакне йӳнетрĕ.

Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн итогĕсене тунă хыççăн, пирĕн республикăна ВЦСПС, СССР Наркомземĕ тата СССР Наркомземĕн Политуправленийĕ Оборонăн Государственный Комитетăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме кандидата тăратрĕç.

МТС-сем енĕпе республика ĕçне пысăк хак пачĕç, анчах пирĕн тата лайăхрах ĕçлеме майсем пуррине манма юрамасть. Тракторпа тумалли ĕçсен планне çуррине кăна тултарнă МТС-сем те пирĕн чылай. Вĕсем — Етĕрне, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри тата Шăмăршă МТС-сем. Çак МТС-сен директорĕсемпе политотдел начальникĕсем хăйсен йăнăшĕсене шута илсе, МТС ĕçне лайăхлатассишĕн çине тăрса ĕçлерес вырăнне, хăйсен начар ĕçне объективлă сăлтавсемпе ăнлантарса пама тăхăççĕ. Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ 8 комбайнпа та 175 гектар çеç урăхла каласан, Çĕмĕрлери МТС-ри пĕр комбайнер Михайлов юлташ вырса пуçтарнинчен виçĕ хут сахалтарах пухса илнине, Сĕнтĕрвăрри МТС-ĕ 23 тракторпа та 1.320 гектар çеç, урăхла каласан, Тăвай МТС-ри Петров юлташăн бригади 3 тракторпа сухаланинчен икĕ хут çеç нумайрах сухаланине МТС руководителĕсен тимсĕрлĕхĕпе ăнлантарса памасан, мĕнле ăнлантарса памалла-ха?

Юлса пыракан МТС-сем начар ĕçленин сăлтавĕ çакăнта: вĕсен директорĕсемпе политотдел начальникĕсем ĕçе конкретно ертсе пымаççĕ, ĕçе тĕплĕн пĕлмеççĕ, çиелтен тăваççĕ, йĕркелĕхпе дисциплинăшăн тăрăшмаççĕ, механизаторла кадрсене хатĕрлес тата вĕрентсе ӳстерес тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, вĕсене пулăшмаççĕ, производствăллă плана тултарма мобилизацилемеççĕ.

Юлса пыракан МТС-сен руководителĕсен, çавăн пекех тата парти райкомĕсен секретарĕсен МТС-сен ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнас пулать.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн туса ирттерес çĕрте МТС политотделĕсем пысăк вырăн йышăнса тăчĕç. Массăллă-политикăллă тата организациллĕ ĕçе анлăн сарса, партипе правительство решенийĕсене кашни трактористпа комбайнера тата колхозника ăнлантарса парса, политотделсем Сталин юлташ ялхуçалăх умне лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме массăсене çĕклерĕç.

МТС политотделĕсем çĕнĕ кадрсем, уйрăмах хĕрарăмсем хушшинчен кадрсем хатĕрлес, ĕç дисциплинине çирĕплетес, социализмлă ăмăртăва сарас, пуçламăш парторганизацисене çирĕплетес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем туса ирттерчĕç.

Анчах малта пыракан политотделсемпе пĕрлех, пирĕн начар ĕçлекен, массăна производствăллă заданисене пурнăçланă çĕре тивĕçлипе мобилизациленмен политотделсем те пур. Вĕсем Шăмăршă, Сĕнтĕрвăрри, Çĕрпӳ тата Етĕрне МТС-сенчи политотделсем пулса тăраççĕ.

Политотделсем çулталăк хушши ĕçлесе, пысăк опыт пухрĕç. МТС-семпе колхозсенче большевикла йĕркелĕх тăвассишĕн, ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн, мĕнпур çитменлĕхсене пĕтерессишĕн çине тăрса ĕçлемелле тата çакна пурнăçа кĕртмелле: кашни МТС тракторпа тумалли ĕçсен планне тултартăр çеç мар, вăл стахановла тырпул илме майсем туса патăр, МТС машинисем ĕçлекен районри кашни колхоз ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлăн вĕçлетĕр, государство умĕнчи обязательствăсене вăхăтра пурнăçлатăр.

Пирĕн республика социализмлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те палăрмалла çитĕнӳсем турĕ. Ку ĕçре ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Çамрăк выльăхсене сыхласа усрамалли тата колхозсемпе совхозсенчи выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ӳстермелли мерăсем çинчен» йышăннă постановлени питех те пысăк вырăн йышăнса тăчĕ. 1942 çулăн 11 уйăхĕ хушшинче республикăра майракаллă шултăра выльăхсен хисепĕ 45 процент, сыснасен хисепĕ 47 процент, сурăхсемпе качакасен хисепĕ 78 процент ӳсрĕ. Уйрăм районсем—Çĕрпӳ, Канаш, Сĕнтĕрвăрри т. ыт. те—сурăхсен хисепне икĕ хута яхăн, майракаллă шултăра выльăхсен хисепне 150 процента яхăн ӳстерчĕç. 1942 çулти декабрĕн 1-мĕшĕ тĕлне республика общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана майракаллă шултăра выльăхсем енĕпе 102,2 процент, сыснасем енĕпе — 104,8 процент, сурăхсемпе качакасем енĕпе—100,5 процент тултарчĕ. Анчах Йĕпреç, Кувакино, Пăрачкав тата Шăмăршă районĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана нихăш выльăх енĕпе те тултарман.

Колхозсенчи выльăх-чĕрлĕх фермисен ĕçне лайăхлатнă çĕрте партипе правительство колхозниксене выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени хăватлă хĕтĕртекен пулса тăчĕ. Ишлей районĕнчи колхозсем 1942 çулăн 10 уйăхĕ хушшинче ĕнесенчен 320 пин литр ытларах сĕт суса илчĕç. Улатăр районĕнчи колхозсем кăçал пĕлтĕрхипе танлаштарсан, 66.761 литр ытларах сĕт суса илнĕ: Малтан палăртнă тăрăх, выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн,

(Юлашни 2-мĕш страницăра)

Ялхуçалăхĕнчи çитĕнÿсене çирĕплетсе, çĕнĕ çĕнтерÿсемшĕн кĕрешер!

(Юлашки, пуçламăшĕ 1-мĕш стр.)

тата çамрăк выльăхсене сыхласа усранăшĕн 12 районра 600 ытла çын ĕçшĕн хупса илеççĕ.

Анчах общественнăй выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре пирĕн пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Ама выльăхсен хисепĕ—выльăх-чĕрлĕх малашне ĕрчетмелли тĕп база—çителĕксĕр ÿсет. Колхозсенче пĕçех выльăхсем пăрулассине пăрамласси пуçланать, çавăнпа пĕрлех сыснасем çурăкуне çăвăрласси пуçланмалла. Çавăнпа пĕтĕ ĕнесене, пĕтĕ сурăхсемпе пĕтĕ сыснасене пăхассине тĕпрен лайăхлатмалла, выльăх витисенче талăкĕпех хурал тăрассине организацилемелле, çуралнă кашни çамрăк пăрăва, путеке, сысна çурине сыхласа хăвармалла, пĕр çамрăк выльăха та вĕлермелле мар. Ку ĕçре айăплисене çирĕп ответ тыттармалла. Çамрăк пăрусемпе путексене, сысна çурисене ăшă та типĕ витесене вырнаçтармалла, çамрăк выльăхсене пăхма чи лайăх колхозницăсене уйăрса лартмалла.

Республикăри чылай районсенче выльăх-чĕрлĕхе хĕл каçарма хатĕрленес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем тунă. Анчах ку ĕç хăшпĕр çĕрте халĕ те вĕçленмен-ха. Ĕçри çитменлĕхсене хăвăрт пĕтермелле, выльăхсене лайăх витесем тата пăхвармалли вырăнсем туса памалла. Выльăх апатне сыхласа усранине тата расходланине тимлĕн контрольлесе тăмалла. Çак çывăх кунсенчех фермăсем валли выльăхсем илсе çитермелле, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур выльăхсем енĕпе те тултармалла, фермăсенче ĕçлекенсем хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе, зоотехникăна вĕренессине организацилемелле, выльăхсене тĕрĕс пăхассипе апатлантарассине пурнăçа кĕртмелле.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче лашасем ĕрчетесси уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ку тĕлĕшпе пирĕн пурте йĕркере мар-ха: тихасем вилессине, лашасене стройран кăларассине халĕ те пĕтермен-ха. Лашасем ĕрчетес ĕçре çирĕп йĕрке туса хурас пулать: пĕтĕ кĕсресем хăм пăрахни тата тихасем вилни пачах ан пултăр. Пирĕн колхозсен вăйлă, мăнтăр, сутă хăш вăхăтра та оборона валли юрăхлă лашасем пулмалла. Кушпа пĕрлех вак-тĕвек выльăх-чĕрлĕхе—чăх-чĕп, хур-кăвакал, кролик, хурт-хăмăр ĕрчетес ĕç çине вăйлăнрах çавăрăнса пăхмалла, вĕсен продуктивноçне ÿстерессишĕн кĕрешмелле. Выльăх-чĕрлĕх пăхакан кадрсене, çак ĕçĕн ăнăçлăхне татса паракансене, большевикла тимлĕхпе палăртмалла тата вĕрентсе çитĕнтермелле.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитĕнÿсене çирĕплетессишĕн, вăл çитĕнÿсене ÿстерессишĕн, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пĕтĕмĕшпех пурнăçлассишĕн тата Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ ялавне илессишĕн пирĕн хамăрăн мĕнпур вăйсене мобилизацилесе кĕрешмелле.

Ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлемелли плана ăнăçлăн пурнăçлани вăрçă вăхăтĕнче уйрăмах пысăк, питех те кирлĕ вырăн йышăнать. Апла пулин те республикăра ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Уйрăмах Çĕрпÿ, Октябрьски, Куввакино, Елчĕк, Пăрачкав, Чкаловски, Шăмăршă, Первомайски районсем вăйлăн юлса пыраççĕ. Çак районсен руководителĕсем тырă хатĕрлевне начар ертсе пыраççĕ. Елчĕк районĕнчи нумай колхозсенче партипе правительство тырпула колхозăн шалти нушисем валли расходламалли тата колхозниксене аванс памалли йĕркене пăсаççĕ. Çав вăхăтрах ВКП(б) Елчĕк райкомĕ тырпул хатĕрлевĕсене саботаж тăвакансен сиенлĕ ĕçне пытарса, политикăллă тимсĕрлĕх кăтартрĕ. ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ çакăншăн ВКП(б) Елчĕк райкомĕн секретарьне Волков юлташа хытă ятларĕ.

1943 çулти январĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр, тырпул хатĕрлевĕсен планне кирек мĕнле пулсан та тултармалла. Ку ĕçре тырра кирлĕ мар çĕре салатассине государствăна кирĕçле практикине сирмелле, юлса пыракан колхозсене авăн çапас тата тырра хатĕрлев пункчĕсене турттарас ĕçсенче пулăшмалла.

Килти запасран Хĕрлĕ Çар фондне тĕштырă сыпма йышăннă Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен патхатарлă пуçарăвне анлăн сармалла. Çавăн пекех Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозăн пуçарăвне те, МТС-ăн çитес çулхи ĕçĕшĕн аванс шучĕпе 600 центнер натуроплата тырри тÿленĕскерĕн пуçарăвне, пур çĕрте те сарса пымалла.

Чăваш республикинчи большевиксен, республикăри мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсен чысллă ĕçĕ—государствăна тырă тата ытти продуктсем парассине мĕн май килнĕ таран хăвăртлатасси, 1943 çулхи çуракине организованно хатĕрленме тытăнасси тата тимлĕн ĕçлесе пирĕн республикăна Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне памалла тăвасси пулса тăрать.

Çуракине большевикла туса ирттерме халех вăйлăн хатĕрленмелле. Чи малтан, вăрлăх хатĕрлесе хумалла. Анчах вăрлăх фончĕсене тырă хывасси республикăра майĕпен пырать. Шăмăршă, Йĕпреç, Улатăр, Куввакино, Первомайски, Пăрачкав районĕсем çак ĕçре уйрăмах юлса пыраççĕ. Çĕр органĕсен тата советпа парти органĕсен задачи — колхозсене вăрлăхшăн тăрăшас ытти тавра мобилизацилесси пулса тăрать. Лайăх вăрлăх фончĕсем кирлĕ таран тăвасси тата вĕсене тирпейлĕн пăхса усрасси—1943 çулта тырă нумайтарах туса илес ĕçри чи кирлĕ мероприятисенчен пĕри пулать. Вăрлăх фончĕсене тунипе пĕрлех тата страховка фончĕсене те тумалла.

Тепĕр пысăк ĕç вăл—тракторсене, ялхуçалăх машинисене, лашапа ĕçлемелли инвентарьсене юсасси тата вĕсен запаслă пайĕсене вырăнтах тăвас ĕçе организацилесси пулса тăрать. МТС-сен руководителĕсен машинăсемпе тракторсене çураки валли хатĕрлесе курас тĕлĕшпе хăйсем ответлă пулнине манас пулмасть. Вĕсен машинăсен пайĕсене юсас е çĕнĕрен тăвас тĕлĕшпе паха рационализаторла опыта анлăн сармалла, машинăсене юсанă çĕрте ĕçе лайăх организацилеме тата технологи процесне тĕрĕс йĕркелесе яма тăрăшмалла, хăйсен шалти мĕнпур ресурсĕсене мобилизацилемелле тата тракторсене малтан кăтартнă срокра тата пысăк пахалăхпа юсамалла. Мĕнпур ялхуçалăх инвентарьне вăхăтра хатĕрлесе çитермелле. Колхозсен тимĕрçисене кунĕпех ĕçлеттермелле тата вырăнти промышленность предприятийĕсен тимĕрçĕ лаççисемпе усă курмалла. Пирĕн заводсем хăйсен тĕп программине пурнăçа кĕртес ĕçе сиенлемесĕрех ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем тума пултараççĕ.

Транспорт инвентарьне — çунасене, урапасене, кустăрмасене тата пăяв тăврашĕсене юсас тата çĕнĕрен тăвас ĕç çине уйрăмах вăйлăн çавăрăнса пăхмалла.

Çуракинче лаша питех те пысăк вырăн йышăнса тăрĕ. Районсен руководителĕсем лаша ыйтăвĕпе хăйсен контрольлесе тăмалла, лашасем мĕнле хĕл каçнине, мĕнле тăнине, тĕрĕслесе тăмалла, лашана лайăх пăхса усраттармалла. Хĕл вăхăтĕнчех тата ялхуçалăх ĕçĕсенче усă курма вăйракаллă выльăха хатĕрлесе хумалла.

Хĕллехи вăхăтра пирĕн колхозсен ертсе пыракан тата массăллă кадрĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе нумай ĕçлемелле. ВКП(б) райкомĕсемпе политотделĕсен çак питĕ кирлĕ ĕçе ертсе пырассине хăйсен аллине илмелле.

Агротехника мероприятийĕсене пурнăçлама халех хатĕрленмелле. Хĕл каçа пирĕн 1.000 пин тонна тислĕк, 500 пин тонна торф хатĕрлесе хурса хирсе кăлармалла, 80 пин центнер кĕл, 50 пин центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухмалла, сельхозснабпа фосфорит заводĕн складĕсенчен унти минераллă удобренисене ялсене илсе каймалла, 150 пин гектар çĕр çинче юр тытса юлмалла; вăрçа чăн-чăн тивĕçлĕ тырă туса илмешкĕн пирĕн агротехника мероприятийĕсене пурне те пурнăçа кĕртес пулать.

Ялхуçалăх ĕçĕсене пурне те вĕçленĕ хыççăн, государство умĕнчи обязательствăсене пурнăçланă хыççăн, вăрлăх тата страховка фончĕсене туса çитернĕ хыççăн колхозсен çулталăкри тупăшпа тырпула тĕрĕс валеçсе памалла. ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсен çак ĕçре колхозсене пулăшас пулать.

Сталин юлташ пире çакна кăтартса парать: коллективлă хуçалăх вăл эпир ялхуçалăх тĕлĕшпе тăрăшассине чакармасть, ÿстерсе ярать. Анчах та хăшпĕр райкомсен секретарĕсем ялхуçалăх ыйтăвĕсем тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ, уйрăм колхозсем мĕншĕн кая юлнине тĕпчесе пĕлмеççĕ, кая юлнисене малтисене хăваласа çитерттерес тесе конкретнăй мерăсем йышăнмаççĕ, çак ĕçе партипе комсомол организацийĕсене тата актива хутшăнтармаççĕ.

Ялхуçалăх ыйтăвĕсене тарăнрах сÿтсе-явмалла. Ĕçе ертсе пырассине лайăх йĕркелесен кăна, хуçалăх ĕçĕсене, парти организациллĕ ĕçĕсене тата партин политикăллă ĕçĕсене пĕр-пĕринпе лайăх çыхăнтарса туса пырсассăн кăна кирек мĕнле ыйтăва та, кирек мĕнле задачăна та ăнăçлăн татса пама пулать. Пирĕн çапла тумалла: ялхуçалăх работникĕсем хушшинче, чи малтан коммунистсемпе комсомолецсем хушшинче, çăвар карса тăракан тата тирпейсĕр çынсем, хăйсен граждăнла тивĕçлĕхне туйса тăман çынсем пĕрре те юлмалла мар. Колхозсем государствăн заданийĕсене вăхăтра пурнăçа кĕртсе пычăр. Çапла пултăр тесен, пирĕн агитациллĕ-массăллă ĕçе большевикла сарса ямалла. Çав ĕçе партипе комсомол тата совет активне хутшăнтармалла. Ертсе пыракан кашни работникăн, вăл кирек мĕнле вырăнта ĕçлет пулсан та, массăсем хушшинче политикăллă ĕçсем туса тăмалла.

Килес çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ялта социализмлă ăмăртăва тата анлăрах сарса ярар!

Ялхуçалăхĕнчи çитĕнÿсене çирĕплетсе, çĕнĕ çĕнтерÿсемшĕн большевикле кĕрешер!

Оборонăн Государственнăй Комитечĕн куçса çÿрекен Хĕрлĕ Ялавне илме тивĕçлĕ пулас тесе пĕтĕм вăйпа тăрăшар!

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 22-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 22-мĕшĕнче пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче тата **Центральнăй** фронтра малтанхи енчеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени туса пырса халăх пурăнакан вуншар пункта, çав шутра халăх пурăнакан пысăк пунктсене — **Колещатое, Никольское, Морозовка, Верхне-Грачевский, Поповка, Каменский, Греков, Федоровка** пункчĕсене тытса илнĕ.

* * *

Декабрĕн 21-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 40 автомашинăна пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, артиллерин 3 батарейине пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн пехотине пĕр рота таран сапаласа янă, вĕсенчен пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем активлăн кĕрешсе нимĕçсен 10 дзочĕпе 25 блиндажне тытса илнĕ. Кун каçа противникăн пехотине икĕ рота таран пĕтерсе тăкнă. Хулан вăтаçĕрĕнчи районĕнче гитлеровецсем темиçе хут контратака тунă, контратакисем ăнăçман. Пирĕн боецсем противникăн пур контратакисене те сирсе ярса, пăртак малалла куçнă. Ытти участоксенче пирĕн чаçсем противник çине персе тăнă. Сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 5 самолетне, çав шутра 4 транспортнăй самолетне, пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградăн çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем разведка тунă тата артиллерирен противникпа хире-хирĕç персе тăнă. Пĕр высота районĕнче Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн икĕ атакине сирсе ярса хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Нимĕçсен 4 танкне, 11 пулеметне тата 9 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсен 200 салтакĕпе офицерĕ ытла вилнĕ. Артиллерипе миномётсенчен персе, нимĕçсен 14 дзочĕпе блиндажне ишĕлтернĕ, артиллерин 3 батарейине тата минометсен 2 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Совет войскисем противникăн йышлă вăйĕсем хĕснине тытса чараççĕ, вĕсене пысăк сиен кÿреççĕ. Нимĕçсен танкĕсемпе мотопехоти пырса çитсенех халăх пурăнакан пĕр пункта тытса илме хăтланнă, анчах та вĕсене вăйлăн хирĕç тăнă. Çав çапăçусенче тăшманăн 1000 салтакĕпе офицерне çити вĕлернĕ, нимĕçсен 60 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă, 21 орудине, 13 пулеметне тата 64 автомашинине пĕтерсе тăкнă.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем ăнăçлăн наступлени тунă. Н-ски часть, каялла чакакан тăшмана хăваласа пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта тытса илнĕ. Совет боецĕсем пыра-пыра çапнипе противник çапăçу хирĕнче техникăпа хĕçпăшалсем тата боеприпассем пăрахса хăварать. Тăшманăн уйрăм групписем Хĕрлĕ Çара малалла куçма чарас тесе йĕркесĕр тăрăшнисем ăнăçман, вĕсем нимĕçсене, унсăр та питĕ пысăк çухатусем тÿснĕскерсене, тата пысăкрах сиен кÿнĕ çеç. Н-ски соединени икĕ кун хушшинче тăшманăн 6.000 салтакĕпе офицерне яхăн пĕтерсе тăкнă. 100 автомашина, 200 лав тата 30 оруди тытса илнĕ. Тепĕр участокра противник пехотин пĕр батальонĕ пĕтĕм батальонĕпех тата хăйĕн командирĕпе пĕрлех тыткăна парăннă.

* * *

Центральнăй фронтра пирĕн войскăсем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă тата противникăн çавăрса илнĕ гарнизонĕсем çине тапăнса пынă. Ржевран хĕвеланăçнерехри районра штурмлакан отрядсем нимĕç пехотине пĕр рота таран пĕтерсе тăкнă, 5 дзота тата 2 блиндажа ишĕлтернĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн контратакисене сире-сире ярса 600 гитлеровеца çити вĕлернĕ, 20 дзотпа 22 блиндажа ишĕлтернĕ, 7 пулемета, 2 орудие тата 5 миномета пĕтерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Смоленск облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен çар эшелонне ÿпĕнтерсе янă. Темиçе кун иртсен партизансем сасартăк волость управленине тапăннă та 50 нимĕç салтакĕпе полицейскине вĕлерсе тăкнă. Тепĕр отрядри партизансен ушкăнĕ, тăшманăн 10 автомашинине, тягачне тата пĕр мотоциклне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Аяларахра нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Калинин облаçĕнчи Ширипино тата Максимиха ялĕсенче тискер ĕçсем туни çинчен çырнă акта пичетлетпĕр: «Нимĕç бандичĕсем хресченсенчен пĕтĕм продовольствие тата мĕнпур выльăх-чĕрлĕхе туртса илнĕ. Гитлеровецсем шартлама сивĕ тăнине пăхмасăрах, çав ялти çынсене пурне те ачисемпе пĕрлех урама хăваласа кăларнă. Нимĕç салтакĕсем Ширипино ялĕнчи 13 колхознике вăрмантан тавăрăннă чухне çул çинче тытса чарнă. Çав колхозниксем пĕрер çĕклем вутă йăтса пынă. Фашистла палачсем вĕсене пурне те, çав шутра 65 çулхи Иван Кудрявцева, 20 çулхи Дария Марцевăна тата 16 çулхи Василий Филягина персе вĕлернĕ. Максимиха ялĕнче гитлеровецсем мирлĕ пурăнакан 18 çынна персе вĕлернĕ». Акта Ширипино ялĕнчи колхозниксем Андрей Кувшинов, Василий Колосов, Ефросинья Кувшинова, Александра Гренева тата старши лейтенант Дряхловпа красноармеец Гусельников алă пуснă.

* * *

Югославири партизансем Сански Мост тата Босански Нови районĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ. Партизансем оккупантсемпе кĕрешсе тăшманăн нумай салтакне вĕлернĕ, 2 танкне пĕтерсе тăкнă тата аэродромра пĕр бомбардировщика сиенленĕ. Хаяррăн çапăçнă хыççăн патриотсем Ласинья, Скаковец, Сеничак ятлă халăх пурăнакан пунктсене тата ыттисене те йышăнса илнĕ. Партизансем итальянец салтакĕсен пысăк ушкăнне тыткăна илнĕ, трофейăсем нумай тытса илнĕ, çав шутра юсавлă 3 танка тытса илнĕ.

Декабрĕн 23-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Декабрĕн 23-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем **Сталинград** районĕнче, **Центральнăй** фронтра тата **Донăн** вăтаçĕрĕнчи районра малтанхи еннеллех наступлениллĕ çапăçусем туса пынă.

* * *

Сталинградăн заводсем вырнаçнă районĕнче пирĕн чаçсем активлăн çапăçса противника 10-шар дзотпа блиндажран хĕсĕе кăларнă. Нимĕçсем темиçе хут контратака тунă, анчах 200 салтакпа офицер таран çухатсан каялла чакнă. Пирĕн боецсем 2 оруди, 2 миномет тата 29 ручной пулемет тытса илнĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн подразделенисем çĕрле нимĕçсен позицийĕсене атакăланă та хаяр çапăçу хыççăн темиçе окоппа блиндажа тытса илнĕ. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 150 вилли выртса юлнă. Пирĕннисем 9 пулемет, 2 миномет, 78 винтовка тата радиостанци тытса илнĕ. Тепĕр участокра гитлеровецсен ушкăнĕ разведка тума хăтланнă. Пулеметсемпе тата пăшалсемпе хаяррăн персе, нимĕçсене каялла хăваласа янă, çапăçу хирĕнче вĕсем хĕçпăшалсем тата вуншар вилĕ пăрахса хăварнă.

* * *

Сталинградран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пынă. Противникăн автоматчикĕсемпе 70 танкĕ пирĕн Н-ски чаçăн боецĕсем хÿтĕлекен халăх пурăнакан пункта атакăланă. Пирĕн артиллеристсем çав пункт патне пымалли вырăнсенче нимĕçсен 10 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра противникăн пехотипе танкĕсем чугунçул районĕнче пирĕн позицисене атакăланă, анчах та пысăк çухатусем тÿссе каялла çавăрăнса кайнă. Çав çапăçусенче нимĕçсен пĕр батальон ытла çын вилнĕ, 16 танк, 12 оруди тата 24 пулемет пĕтнĕ.

* * *

Донăн вăтаçĕрĕнчи районра пирĕн войскăсем наступлениллĕ çапăçусем туса пырса, халăх пурăнакан темиçе пункта ирĕке кăларнă. Халăх пурăнакан пĕр пункта йышăннă чухне Н-ски часть тăшманăн 2.200 салтакĕпе офицерне, трофейăсем нумай тытса илнĕ. Çав трофейăсем хушшинче йывăр орудисем автомашинăсем тата тягачсем нумай. Тепĕр участокра Торопов лейтенант ертсе пыракан танксен группи халăх пурăнакан пункта вăркăнса кĕрсе кайнă та 4 орудие пĕтерсе тăкнă тата 170 çынна тыткăна илнĕ. Танкистсен Алкин лейтенант ертсе пыракан тепĕр группи гитлеровецсене атакăланă. Рашара çирĕплейсе ларса, пирĕн танкистсем нимĕç оборонине пусарса лартнă тата тăшманăн 800 салтакĕпе офицерне çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Центральнăй фронтра Ржевран хĕвеланăçнерехре Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн атакине сирсе ярса 150 гитлеровеца çити вĕлернĕ тата 3 танка, хăй тĕллĕн çÿрекен 2 орудие пĕтерсе тăкнă. Великие Луки районĕнче пирĕн штурмлакан отрядсем нимĕçсен халăх пурăнакан пунктра çавăрса илнĕ гарнизонĕсене пĕтерсе тăкас тесе çапăçнă.

* * *

Литвари партизансен пĕр отрячĕ противникăн разъезчĕпе çапăçса 37 нимĕç салтакне вĕлернĕ. Партизансем пĕр пулемет, 14 винтовка, 5 револьвер тытса илсе, пĕр çухатусăрах хăйсен базине тавăрăннă.

* * *

Юлашки вăхăтра гитлеровецсем çакăн пек пĕлтерÿсене йышлăн сараççĕ: нимĕçсен фашистла войскисем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче совет войскисен чылай пысăк ушкăнĕсене çавăрса илнĕ пулать: Декабрĕн 21-мĕшĕнче Берлинри радио çавăн пек пĕлтерÿсем темиçĕ панă. Вĕсенчен пĕринче çапла каланă: «Калининпа Ильмень кÿлли хушшинче противник хăйĕн çавăрса илнĕ чаçĕсене хăтарас тесе пĕр ăнăçусăр тăрăшнă. Çав участокра вырăссен 7 дивизийĕ—19-мĕш, 35-мĕш, 37-мĕш, 47-мĕш тата 74-мĕш стрелковăй дивизисем тата 65-мĕшпе 216-мĕш танковăй дивизисем пĕтнĕ. Юлашки вăхăтра пулса иртнĕ операцисен тĕллевĕ—большевиксем эпир çавăрса илнĕ хăйсен чаçĕсене çăласшăн çапăçни пулнă. Анчах та çав тĕллеве большевиксем пурнăçа кĕртеймен».

Гитлеровецсен çак пĕлтерĕвĕ, ыттисем пекех, шухăшласа кăларнăскер пулса тăрать. Пĕрремĕшĕнчен, Калининпа Ильмень кÿлли хушшинче нимĕç фронт линийĕ те çук. Фронт Ильмень кÿллинчен пуçласа Великие Луки хули патнелле пырать. Великие Луки Калининран 340 километр хĕвеланăçнерехре ларать. Нимĕçсемшĕн фронт Калинин патĕнче пулни лайăхрах ĕнтĕ те, анчах çакă вăл вĕсенчен килмест. Иккĕмĕшĕнчен, гитлеровецсем çав дивизисене пĕтерсе хума пултарайман тата пĕтерсе хуман та, мĕншĕн тесессĕн вĕсенчи хăшĕ-пĕри сăмахран, 65-мĕшпе 216-мĕш танковăй дивизисем, Хĕрлĕ Çарта нихçан та пулман тата халĕ те çук, ытти дивизисем халĕ те çапăçаççĕ, анчах та ытти фронтсенче çапăçаççĕ, вĕсем нимĕçсен фашистла войскисене ăнăçлăн аркатса пыраççĕ. Виççĕмĕшĕнчен, Ильмень кÿлли патĕнче те, ытти çĕрте те, совет войскисене çавăрса илмен. Анчах ахальтен мар нимĕçсем юлашки кунсенче «çавăрса илнĕ» тенĕ сăмаха час та часах калаççĕ. Çапла калама вĕсен сăлтав пур. Гитлерла командовани, сăмахран, Германи халăхне войскăсене, анчах та совет войскисене мар, нимĕç войскисене çавăрса илни çинчен каласа пама пултарнă пулĕччĕ. Анчах гитлеровецсем чăнлăха юратмаççĕ, вĕсем нимĕç войскисене чăннипех çавăрса илни çинчен пĕр сăмах та каламаççĕ. Ку çеç те мар-ха, вĕсем совет войскисене çавăрса илнĕ тесе суя халлапсем яраççĕ, вара ухмаха тăрса юлаççĕ. Вырăссен ваттисем каланине кăшт урăхлатса каласан—«Камăн та пулин ĕнни мĕкĕрсен, нимĕçĕн ĕнни çухăрмасан та пырĕччĕ».

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Советĕнче

Профсоюзсен Пĕтĕм Союзри Центральный Совечĕ халăх хуçалăхĕнчи икĕ тĕрлĕ промышленноçăн заказĕсене пурнăçлакан предприятисен Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвĕн 1942 çулхи ноябрь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухнă.

ВЦСПС пирĕн республикăри Н-ски завода (завод директорĕн заместителĕ Бунин юлташ) пĕр промышленность енĕпе лайăх ĕçлет тесе палăртнă, тепĕр промышленность енĕпе иккĕмĕш преми пама йышăннă.

Ытлашши тырра—Хĕрлĕ Çар фондне

КОЛЬЦОВКА, декабрĕн 21-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Елчĕк районĕнчи «Марс» колхоз членĕсен пуçарăвне пирĕн колхозниксем пулли хаваспа йышăнса илчĕç. Вĕсен çырăвне сÿтсе-явнă хыççăн, пирĕн колхозниксем çак ĕç валли пĕр кун хушшинче 400 пăт тырă пухрĕç. Эпĕ хамăн запасран 30 пăт тулă паратăп, çавăн пекех Клавдия Талаева, Анисим Грядов, Татьяна Пупина юлташсем 10-шар пăт параççĕ. Ытлашши тырра Хĕрлĕ Çар фондне хывас ĕçе пирĕн кашни колхозник хутшăнать.

А. ВАСЯНИН,

Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли—ăшă тумтирсем

СЕНТЕРВĂРРИ. Юртакасси ялĕнчи колхозниксем фашистла захватчиксене хирĕç хаярăн çапăçакан мухтавлă хĕрлĕ воинсене ăшă тумтирсем парса пулăшаççĕ. «Искра» колхоз членĕсем Я. Трофимов, Я. Ильин, И. Харитонов, И. Владимиров, И. Васильев юлташсем пĕрер тир, П. Егорова, И. Челнокова, В. Пупелова, В. Тимофеева юлташсем 200-шер грамм çăм пачĕç. Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли колхоз хăй енчен 3 тир, 15 кĕренке çăм, пĕр ватккăллă шинель тата ытти япаласем пачĕ.

К. Ч.

Чехословакин Совет Союзĕнчи посолĕ З. Фирлингер господин хăйĕн верительнăй грамотисене пани

Декабрĕн 19-мĕшĕнче СССР Верховнăй Совет Президиумĕн Председателĕ М. И. Калинин юлташ Чехословакин Совет Союзĕнчи чрезвычайнăй тата полномочнăй посолне З. Фирлингер господина йышăннă, З. Фирлингер господин ăна хăйĕн верительнăй грамотисене панă.

1943 çулшăн аш-какай

ЕТĔРНЕ. Хĕрлĕ Çарăн паттăр кĕрешĕвĕпе хавхаланса, районри колхозсемпе колхозниксем 1943 çулшăн государствăна аш-какай тата натуроплата тыррине параççĕ. Балдайри Буденный ячĕпе тăракан колхоз 1943 çулшăн государствăна пĕр тонна, Полянкăри Киров ячĕпе тăракан колхоз 2,5 тонна, Волчь-Долинăри Калинин ячĕпе тăракан колхоз 1,5 тонна, Ирçери «Сура» колхоз 2 тонна аш-какай панă.

И. ЛЬВОВ.

Рабочисене—пахча-çимĕç

ЭЛЕК. Хурăнкассинчи «Надежда» колхоз членĕсем Шупашкар районĕнчи «...» колхозри колхозниксемпе колхозницăсем заводри рабочисене продуктсем тата пахча-çимĕçсем сутма чĕнсе каланине ырă кăмăлпа йышăнчĕç. Вĕсем, çак пуçарăва ырласа, рабочисене сутма кашниех 2—3-шер пăт çĕрулми купăста пачĕç. Çапла, пĕтĕмпе 50 пăт çĕрулми, 25 пăт купăста пухăнчĕ. Пухăннă продуктсене рабочисене леçсе панă.

М. КУСТИКОВ.

ТАНКСЕН ХĂВАТЛĂ КОЛОННИСЕНЕ ТĂВАР!

А. Д. Васянин юлташ 100.000 тенкĕ хывнă

КОЛЬЦОВКА. (Телефон тăрăх)

Сталин юлташăн историллĕ доклачĕпе тата приказĕпе хавхаланса, Ферапонт Головатый колхозникĕн ырă пуçарăвне йышăнса илсе, Вăрнар районĕнчи Кольцовкăри Ленин орденлĕ Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ АНТОНИН ДМИТРИЕВИЧ ВАСЯНИН юлташ танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума 100.000 тенкĕ укçа хывнă.

Танксен колоннисене тума укçа пухас ĕç республикăра мĕнле пырать

Республикăри колхозниксем, трактористтем тата служащисем Хĕрлĕ Çар валли танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума укçа хываççĕ. Декабрĕн 23-мĕшĕ тĕлне танксен «Колхозник Чувашии» тата «Тракторист Чувашии» колоннисене тума пĕтĕмпе 24.000.000 тенкĕ яхăн укçа пухнă.

Уйрăм районсенчен çак ĕçре халăх вăхăтра Вăрнар, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Чкаловски тата Калинински районсем малта пыраççĕ. Вĕсенчен кашниех танксен «Колхозник Чувашии» колоннине тума пĕр миллион çурăшар тата миллионшар тенкĕ укçа пухса панă.

Анчах хăшпĕр районсенче танксен колоннисене тума укçа пухас ĕçе кирлĕ пек сарса яман-ха. Ку тĕлĕшпе уйрăмах Шăмăршă, Первомайски, Хĕрлĕ Чутай, Куславкка, Красноармейски тата Элĕк районĕсем çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Республикăра çавăн пекех танксен «Тракторист Чувашии» колоннине тума укçа пухас ĕç те çителĕксĕр пырать. Чылай районсем ăна тума 20—50-шар пин тенкĕ кăна пухнă. Сĕнтĕрвăрри районĕ вара 4 пин тенкĕ, Куславкка районĕ 16 пин тенкĕ çеç пухса панă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, промышленность пайĕн 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 11[illegible] Типография № 1 Управлени полиграф [illegible] при СНК ЧАССР. Заказ № 2 Ф 6. 58 84 п